**Юрату юрлаттарать**

(новелла)

Света пěчěкренех кěнеке вулама юратса ӳсрě, çавăнпа вăтам шкултан вěренсе тухсан малалла ăс пухма тăван литературăпа чěлхе уйрăмне суйласа илчě. Ача чухне ырă юмахсем кăмăллаканскер çитěннě май хастар рыцарьсем çинчен юптаракан хайлавсене ытларах кăмăлларě. Кěçех хěр хăй тěлне те пěр-пěр рыцарь килсе тухасса кěтме тытăнчě. Анчах ěмěчě ниепле те пурнăçланаймасть — ăна куç хывакан студентсем хушшинче кěнекери пек паттăр тупăнмасть те тупăнмасть.

Костя та ав, пулас инженер, нимěнпе те илěртмест ăна: ыттисенчен уйрăлса тăмасть вăл. Каччă вара хěре хытах юратса пăрахрě. Света кăмăлне çавăраймасăр тěмсěлет апăрша.

— Кăлăхах вăхăтна сая ан яр-ха, — лăплантараççě ăна тусěсем. — Сан валли урăх хěр çук-им? Света вěт ытла мăн кăмăллă, пěр-пěр принц тупăнасса шанать мар-и? Вăл — хула хěрě, эс — ялтан.

Костя тантăшне пěрле уçăлса çӳреме чěнсен хěр килěшкелет. Кинона та кайкаласа курчěç, театрта темиçе пулчěç, Светăн чунě вара çав-çавах. Пěррехинче каччă пěр-пěринпе чун уçса калаçма сěнчě те, хěр пытарса тăмарě мěн шутланине.

— Каçар та, эс ман хыççăн ахалех чупатăн. Хăв пекки кирлě сана, ансатраххи, — терě.

Костьăшăн ку çупса янă пекех туйăнчě, анчах хирěç шарламарě. Пěр эрне сас памарě вăл, алă сулса пăрăнса утас вěçнех çитрě, анчах юрату серепи ăна ниепле те вěçертмерě. Каччă хěр кăмăлне йăпатма юрăхлă мел шырарě. Чечек парнелесе куркаланă-ха вăл — усси пулмарě, çуралнă кун ячěпе саламласа хěр пурăнакан çурт умěнчи тарăн юра таптаса «Света, эпě сана юрататăп!» тесе те çырса пăхнăччě — тěлěнтерейменрě...

Ентешěпе, Культура институтěнче вěренекен Сашăпа, тěл пулчě Костя ăнсăртран. Канмалли кун тăван ялне таврăнсан. Клуба Культура институтěнче вěренекенсем концерт лартма килнине пěлчě те ятарласа курма

кайрӗ. Саша унран пӗр ҫул аслăрах, музыкант. Юрлама та, ташлама та, кӗвӗ калама та ăста. Алла гитара тытсан вара кирек кам чунне тыткăнлӗ пултарулăхӗпе.

Концерт хыççăн клубран иккӗшӗ пӗрле тухрӗç. Студентсемшӗн пӗр чӗлхе тупасси кăткăс-и? Сӳтсе явмалли темӗн чухлех.

— Костя, эс хăв та гитара калаттăнччӗ-иç. Пăрахмарăн пуль? — интересленчӗ Саша. — Пирӗн патра гитаристсен кружокӗ ӗçлет, пырса çӳрес кăмăлу çук-и? Уяв каçӗсем те пит хаваслă иртеççӗ.

— Сана итлерӗм те паян, тек алла гитара тытса намăсланма пăрахмалла пуль тетӗп, — хуравларӗ Костя. — Уявсем вара... Эпир хамăр та ирттеретпӗр. Пӗр-пӗрин патне ма çӳрес мар?

— Пӗр-пӗр хӗрпе паллаштарăп, — илӗртрӗ Саша.

— Пур-ха ман... Тупрăм хам валли... Тепӗр чух пăрахса тарас килет...

— Ма ун пекех тата? — тӗлӗнсе пăхрӗ Саша. Хӗрсемшӗн чунне ыраттарса курман вăл: хăйсем ун хыççăн чупаççӗ. Пит ансат майпа тыткăнлать вӗсене — гитарине тытать те янратса ярать пӗр-пӗр серенада е романс... — Вӗрен манран, тен, усси пулӗ?

Саша сăмахне Костя малтан ăша илменччӗ, анчах пӗррехинче Светăна тусӗпе паллаштарчӗ те хӗре каччă романсӗсемпе серенадисем самантрах тыткăнланине туйса илчӗ.

«Пӗрре те шӳтлемест иккен Саша: авă еплерех иккен вӗсем, хӗрсем. Юрама пӗлмелле-мӗн вӗсене. Эп пултараймастăп-и?» — тӗв турӗ те Костя

Саша патне çӳресе гитара калас ăсталăхне ӳстерме пикенчӗ. Тăрăшсах тӗрлӗ романс вӗренчӗ.

Хӗр пуçне çаврăрма меллӗ вăхăт килсе тухасса кӗтрӗ Костя. Анчах ăна тӗлӗнтерме юрăхлă май тупăнмарӗ-ха. Асаилсех кайрӗ: кӗнекесенчи рыцарьсем пикесене вӗсен чӳречи айӗнче юрласа тыткăна илеççӗ-çке.

Каçхине, тӗттӗмленсен, Костя Светăсен балконӗ айне çитсе тăчӗ. Малтан хӗр килте пуррине телефонпа ыйтса пӗлчӗ. Каччă Сашăран илнӗ гитарăна майласа тытрӗ те хăй вӗреннӗ романссене черетпе юрлама тытăнчӗ. Иккӗмӗш

хутри балкон чӳречи уҫӑлчӗ те, хӗр курӑнса кайрӗ. Каҫхи музыкант малалла юрларӗ. Хӗр романссем кӑмӑла кайнине пытараймарӗ, алӑ ҫупса ячӗ.

— Кама халаллатӑр вара эсир ку юрӑсене? — чӗнмесӗр тӳсеймерӗ Света.

— Сире, — терӗ те каччӑ ҫутӑ вырӑна тухса тӑчӗ.

— Эсӗ-и ку? — тӗлӗнсе ҫӑварне карса пӑрахрӗ хӗр. — Эсех-и? Эп Саша тесе...

— Эп ҫав... — хӑюсӑррӑн хуравларӗ Костя — Эс Сашӑна кӗтнӗччӗ-и?

— Ҫук-ха. Никама та кӗтменччӗ... — балкон чӳречине шалт хупса ҫухалчӗ хӗр.

Костя гитарине хул хушшине хӗстерчӗ те троллейбус чарӑнӑвне уттарчӗ.

— Айван, — ятларӗ хӑйне хӑй. — Рыцаре тухас терӗн, эппин... Рыцарьсен ӗмӗрне каялла тавӑрас терӗн-и? Ахальтен каламаҫҫӗ ӗнтӗ ваттисем ҫын хыҫҫӑн кайса вакка сикетӗн тесе...

*Павлов, С. Юрату юрлаттарать : [новелла] // Павлов, С. Тӗтре : роман, повесть, новеллӑсем / С. Павлов. – Шупашкар, 2012. – С. 325-327.*